Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнченпе тухать

62 (7593) № ✻ Юн кун, 2008 ҫулхи августӑн (ҫурла) 20-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Вырма-2008

## «Эпир кунта ӗҫленишӗн кӑмӑллӑ», –

терӗ типӗтнӗ-аланӑ тырра склада кӗртме автомашина ҫине тиесе пӗтернӗ хыҫҫӑн «Восток» ял хуҫалӑх производство кооперативне ҫур акирен пуҫласа пӗрремӗш юр ӳкиччен ӗҫлеме ҫӳрекен Ситуккасси хӗрарӑмӗ Вена Петровна Самойлова хиртен килнӗ тырӑ машини ҫине кӑмӑллӑн пӑхса.

Калаҫу пуҫламӑшӗнченех ҫакӑ та паллӑ пулчӗ. Ситуккасси бригади (ушкӑнра 6 ҫын) ҫур акире Мулкачкассинче ҫӗр ӗҫне пикенет те ыттисемпе пӗрлех утӑ та ҫулать, вырма ирттерет, кӗр аки тӑвать, хӑйсене ятӑн йышӑннӑ выльӑх кӑшманне кӑларать.

– Хамӑр ялтан эпир кунта пурӗ 10 ҫын. «Восток» хуҫалӑх ертӳҫи пире кашни кун ӗҫе илсе килет, каҫхине киле ӑсатса ярать, кунне иккӗ апатлантарать т. ыт. те. Пӗр сӑмахпа каласан пире кунта ӗҫлеме килӗшет. Ӗҫ тӳлевӗ май килнӗ чух укҫалла, ытларах – тырӑ-улӑмла. Пире вара, ял ҫыннисене, килти хушма хуҫалӑхра выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетме тырӑ-пулӑ питех те вырӑнлӑ. Ҫав выльӑх-чӗрлӗхе усраса илнӗ тупӑшпах ачасене вӗрентетпӗр-ҫке, ура ҫине тӑма пулӑшатпӑр, – калаҫӑва малалла тӑсрӗ Вена Петровна.

Ҫакӑн пек тулли кӑмӑлпа та ӗҫлес мал ӗмӗтпе кӗтсе илчӗҫ пирӗн информаципе художество пултарулӑх ушкӑнне «Восток» хуҫалӑх йӗтемӗ ҫинче ӗҫлекенсем. Акӑ хиртен килнӗ тырӑна вӑхӑтра алассипе тӑрӑшакан А. Шариков та ӗҫрен уйрӑлма ерҫеймест.

– Ҫанталӑк кӗр еннелле сулӑннӑ май уяр кунӗсем те шутлӑ ҫеҫ пулӗ. Апла пулсан унӑн кашни саманчӗпе туллин усӑ курмалла. Тыр-пул тухӑҫӗ вара кӑҫал пӗчӗк мар. Вӑхӑтра акса хӑварнӑ, ҫу кунӗсенче агротехника ӗҫӗсене пӗлсе пурнӑҫланӑ хирсенчен паян гектар пуҫне 30-40 центнер тырӑ килет. Ӑна аласа-типӗтсе вӑхӑтра кӗлете кӗртессипе тимлетпӗр те эпир кунта, – терӗ Александр Матвеевич тырӑ ӑвӑсмалли кӗреҫене алӑран ямасӑр информаци ушкӑнӗнчен хӑйне хумхантаракан ыйтусене ыйтса пӗличчен.

Ҫапла ҫав, ҫӗр ӗҫченӗн паян пӗрремӗш вырӑнта тӑракан тӗллевӗ – тыр-пула ҫухатусемсӗр пухса кӗртесси. Кӗлет тулли пулсан кӗреке те чухӑн пулмӗ, апла пулсан политикӑпа общество ыйтӑвӗсене те татса пама ансатрах пулӗ. Йӗтем ҫинче ӗҫлекенсем район администрацийӗ информацин ҫакнашкал ушкӑнне ӗҫлеттернине ырӑпа палӑртрӗҫ, хӑйсене ӗҫ вӑхӑтӗнче те хумхантаракан ыйтусене килнисем умне кӑларчӗҫ. Тӗл пулура ял ҫыннисен ыйтӑвӗсене район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ-культурӑпа архив ӗҫӗсен пайӗн ертӳҫи А. Андреева, район администрацийӗн социаллӑ пулӑшу хӳтӗлев пайӗн пуҫлӑхӗ Н.Петрова, Оринин ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ А. Суриков хуравларӗҫ. Ҫынсене хумхантаракан ыйтусем тӗпрен илсен килти хушма хуҫалӑха аталантарма паракан кредита, сӗт хакне, пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенче паракан ҫӗр пайӗсемпе ватӑсемпе инвалидсен мӗн тумаллине пырса тиврӗҫ. Ӑнлантаруллӑ калаҫура ыйтусен хуравӗсем пуринче те ҫиеле тухрӗҫ.



Мулкачкассинче вӑй хуракан Ситуккасси ял ҫыннисен бригади (В. Самойлова, В. Терентьев, С. Максимов, Г. Васильев, Н. Шуляев, В. Петров) черетлӗ машинӑна аласа типӗтнӗ тырӑна тиет.



Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ – культурӑпа архив ӗҫӗсен пайӗн ертӳҫи А. Андреева, район администрацийӗн социаллӑ пулӑшу хӳтӗлев пайӗн пуҫлӑхӗ Н. Петрова йӗтем ҫинче ӗҫлекен А. Шариков ыйтӑвӗсемпе интересленеҫҫӗ.



Маларах тӑван хуҫалӑхра тӗп энергетик пулса ӗҫленӗ Геннадий Анатольевич Шариков паян йӗтем ҫинче КЗС машинистӗнче вӑй хурать. Агрегатсем юсавлӑ ӗҫлесси – унӑн тивӗҫӗ.

– Ӗҫлекен ҫынна манманни, унӑн ыйтӑвӗсене вӑхӑтра хурав пани пире шанчӑклӑрах ӗҫлеме, ыранхи куна туллин пӑхма майсем туса парать, – терӗ калаҫу вӑхӑтӗнче йӗтем ҫинче машинистра ӗҫлекен Геннадий Анатольевич Шариков.

Машинист пӗтӗмлетӗвӗ вырмара информаци ушкӑнӗсем ӗҫлени ял ҫыннисемшӗн меллӗ пулнине ҫирӗплетрӗ.

Августӑн 19-мӗшӗ тӗлне «Восток» хуҫалӑх акнӑ тырӑсен 63 процентне пуҫтарса кӗртнӗ, С. Наумовпа П. Вениаминов механизаторсен тӑрӑшулӑхӗпе 145 гектар ҫинче ҫӗртме сухи тума ӗлкӗрнӗ, кӗр аки валли 80 гектар ҫӗр хатӗрленӗ. Хуҫалӑх вырнӑ хирсенчи улӑма ҫийӗнчех пуҫтарса пырать.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сӑн ӳкерчӗкӗсем.**

Ыр кӑмӑллӑха ытларах ҫул парар

## *Йӑлтах Кӑнтӑр Осети халӑхӗ валли!*

Кӑнтӑр Осетире пулса иртнӗ инкек пирки пӗлмен ҫын ҫук та пулӗ. Йывӑрлӑха лекнӗ халӑха пулӑшасси Раҫҫейре кунсерен вӑй илсе пырать.

«Единая Россия» партин Муркашри вырӑнти уйрӑмӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх Кӑнтӑр Осетире инкек тӳсекенсене гуманитари пулӑшӑвӗ парасси анлӑланса пырать. Партин район хаҫачӗн редакцийӗн ҫуртӗнче вырнаҫнӑ обществӑлла приемнӑйне район ҫыннисенчен тум-тир, харпӑр хӑй гигиена хатӗрӗсем килме пуҫланӑ ӗнтӗ. «Единая Россия» партин Муркашри вырӑнти уйрӑмӗн секретарӗ А. Н. Иванов пулӑшу аллине малтан тӑсса панисене чӗререн тав тӑвать. Уйрӑммӑн илсен ҫак ӗҫре район больницин коллективӗ, Е. Жестянкина, А. Филиппова, З. Смирнова, Е. Васильева, Г. Мазикова, Л. Григорьева, Т. Пономаренко предпринимательсем, Йӳҫкассинчи ӗҫ ветеранӗ-педагог Т. Антонова пысӑк тав сӑмахӗсене тивӗҫ. Пӗрлехи тӑрӑшулӑхпа кӗске вӑхӑтрах 300 ача валлилӗх тата ӳссе ҫитнӗ нумай ҫынсем усӑ курма тум-тир пухӑнчӗ. Каламалла, аякри осетинсем тӳсекен инкеке Муркашсем ҫывӑха илни, вӗсене йывӑрлӑхра пулӑшма кар тӑни пирӗн халӑхӑмӑрӑн ырӑ енне кӑтартать. Халӑхран тата предприяти-организацисенчен пулӑшу илесси малалла пырать. Инкек тӳснӗ ҫынсем валли чӑн малтанах утиялсем, вырӑн хатӗрӗсем, ал шӑллисем, ача-пӑча ҫи-пуҫӗ, спорт тум-тирӗсем кирлӗ. Умра ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗн пуҫламӑшӗ пулнӑран шкул ачисем валли портфельсемпе ытти шкул хатӗрӗсем те ытлашши пулмӗҫ.

Укҫа-тенкӗпе пулӑшас текенсен ӑна ятарлӑ счет ҫине куҫармалла:
Р. сч. 40703810575143000018.
К. сч. 30101810300000000609.
БИК 049706609.
Банк получателя: Чувашское ОСБ № 8613 г. Чебоксары.
ИНН получателя: 2112001366
Получатель: Финансовый отдел администрации Моргаушского района Чувашской Республики (Администрация Моргаушского района, л. сч. 06903120012).
Назначение платежа: 90330302050050000180. Гуманитарная помощь гражданам, пострадавших в Южной Осетии. НДС нет.

Пулӑшӑва «Единая Россия» партин Муркашри вырӑнти уйрӑмӗ тата район администрацийӗн социаллӑ пулӑшу центрӗ урлӑ ҫитерме пулать. Ҫыхӑну телефонӗсем: «Единая Россия» – 2-11-80, социаллӑ пулӑшу центрӗ – 2-13-38.

Район администрацийӗнче

## *Хисеп грамотипе наградӑланӑ*

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн 2008 ҫулхи августӑн 8-мӗшӗнчи йышӑнӑвӗпе район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ.

Ял хуҫалӑхӗнче нумай ҫул тухӑҫлӑ вӑй хунӑшӑн:

**Валентина Петровна АСТРАХАНЦЕВАНА,** Муркашри чӑх-чӗп фабрикин ветеринари санитарне.

**Валерий Яковлевич НИКОЛАЕВА,** Муркашри чӑх-чӗп фабрикин операторне.

**Михаил Федорович ШАДРИНА,** Муркашри чӑх-чӗп фабрикин операторне.

---

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн 2008 ҫулхи августӑн 14-мӗшӗнчи йышӑнӑвӗпе ҫаксене район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ.

1. Нумай ҫул тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн тата обществӑлла ӗҫсене хастар хутшӑннӑшӑн – **Леонид Геннадьевич ИЛЬГЕЧКИНА,** «Сундырь-хлеб» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑн директорне.
2. Ял хуҫалӑх производствинче нумай ҫул тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн тата обществӑлла ӗҫсене хастар хутшӑннӑшӑн– **Геннадий Алимпиевич Семеновские,** Чапаев яч. хис. хуҫалӑх механизаторне.

Йыхрав

## Августӑн 20-мӗшӗнче– пӗрлехи информаци кунӗ

Августӑн 20-мӗшӗнче районта пӗрлехи информаци кунӗ иртет. Унӑн теми – Чӑваш Республикин экономикӑпа социаллӑ аталанӑвӗн кӑҫалхи пӗрремӗш ҫур ҫулти итогӗсем, республика бюджетне мӗнле пурнӑҫлани, вӗрентӳ учрежденийӗсем ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне мӗнле хатӗрленни, ӗҫ тӑвакан тата вырӑнсенчи самоуправлени органӗсем обществӑлла инфраструктура объекчӗсене кӗркуннехи тата хӗллехи тапхӑр валли мӗнле хатӗрлени ҫинчен.

Пӗрремӗш ушкӑна район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов ертсе пырать. Унта хӑтшӑнакансем Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗнче тӗл пулусем ирттереҫҫӗ, Мӑн Сӗнтӗр шкулӗнче, «Рассвет» агрофирмӑра, Москакасси ял тӑрӑхӗнче Москакасси шкулӗнче, «Передовик» пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхра пулаҫҫӗ.

Иккӗмӗш ушкӑна район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ, культура тата архив ӗҫӗсен пайӗн пуҫлӑхӗ А.Е. Андреева ертсе пырать. Ку ушкӑн Ҫатракасси ял тӑрӑхӗнчи Ҫатракасси шкулӗнче, Кашмашри Культура ҫуртӗнче, Оринин ял тӑрӑхӗнчи Оринин шкулӗнче, «Оринино» тата «Восток» пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенче пулать.

Юбилей

## Саламлатпӑр

Юратнӑ мӑшӑра, аттене, ҫывӑх ҫыннӑмӑра – Тойкилтӗ ялӗнче пурӑнакан **Владислав Порфирьевич СИЛЬВЕСТРОВА** – 50 ҫул тултарнӑ ятпа, юратнӑ хӗрӗме **ДИАНӐНА** – 14 ҫул тултарнӑ ятпа, юратнӑ аннене, хунямана, кукамая, Кармӑш ялӗнче пурӑнакан **Римма Петровна КУДИКОВАНА** ҫуралнӑ кунӗсем ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Юман пек ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул, иксӗлми вӑй-хал, телей, ӑнӑҫу сунатпӑр. Утас ҫулӑрсем сирӗн такӑр пулччӑр, чирчӗр таврашӗ сирӗн ҫума нихӑҫан та ан ҫыпӑҫтӑр.

**Салампа: мӑшӑрӗ, 3 хӗрӗ, 3 ывӑлӗ, ашшӗ; 2 хӗрӗ, 2 кӗрӗвӗ, ывӑлӗ, мӑшӑрӗ, 9 мӑнукӗпе тӑванӗсем.**

---



Хаклӑ ҫыннӑмӑра, Чуманкасси ялӗнче пурӑнакан **Валентина Петровна АНДРИЯНОВАНА** 60 ҫулхи юбилейпа чун-чӗререн саламлатпӑр.

Санӑн ҫирӗп кӑмӑлу, ырӑ чӗрӳ, ӑшпиллӗхӳ пире пурне те пурӑнма вӑй-хӑват парса тӑраҫҫӗ. Эпир санпа мухтанатпӑр, эс пурришӗн савӑнатпӑр.

Ҫемьере яланах килӗшӳпе тулӑх пурнӑҫ хуҫаланччӑр, кил-йыш ӑшши нихӑҫан та ан сӳнтӗр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, икӗ хӗрӗ, ывӑлӗ, кӗрӗвӗсем, 4 мӑнукӗ, ҫывӑх тӑванӗсем.**

---



Юратнӑ мӑшӑра, аттене, кукаҫие, хуньстарике – Юрпаш ялӗнче пурӑнакан **Павел Яковлевич ЯКОВЛЕВА** 60 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗренен чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр, вӑрӑм кун-ҫул, телей сунатпӑр. Эсӗ пирӗншӗн нумай ырӑ ӗҫ тунине асра тытса, тав туса ҫак уяв кунӗнче ҫӗре ҫити пуҫ таятпӑр. Юман пек ҫирӗп сывлӑх, ҫемьере килӗшӳ, пурнӑҫра телейпе ӑнӑҫу сунатпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, виҫӗ хӗрӗ, пилӗк мӑнукӗ, кӗрӗвӗ тата тӑванӗсем.**